Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

*73 (8034) №* ✻ *Шăмат кун, 2012 çулхи авăн (сентябрь) уйăхĕн 22-мĕшĕ* ✻ *Хакĕ ирĕклĕ*

## Орининсем çĕр улми кăларса пĕтерчĕç

**Фоторепортаж**

Районта тĕллĕн-тĕллĕн вырма та вĕçленмен-ха. Малашлăха пăхакан ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем вара паян уяр кунăн кашни сехечĕпе туллин усă курса ĕç вăйĕн ытларах пайне «иккĕмĕш çăкăр» кăларас ĕçе явăçтараççĕ.

Ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче кăçал «иккĕмĕш çăкăр» пĕтĕмпе 1000 гектар йышăнать. Вырăнти ĕçсене оперативлă пурнăçланăран тата паянхи ĕçе ырана хăварманран «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕ кăçал вырма ĕçĕсенче те малтисен шутĕнче пулнăскер иртнĕ кунсенче «иккĕмĕш çăкăр» кăларас ĕçе те вĕçлерĕ.

Орининсем кĕрхи ĕçсенче пĕр çын пек ĕçлени хуçалăх «иккĕмĕш çăкăра» юлашки гектарсем çинче кăларнă чух вĕсем патĕнче пулсан та алă тупанĕ çинчи пекех курăнчĕ.

– Ĕçрен хăрамасан йĕпе-сапара та йывăрлăхсене çĕнме пулнине хамăр ĕçсене пĕтĕмлетнипе те çирĕплетейретпĕр, – терĕ МТЗ-82 тракторпа копалка кăкарса çĕр улми кăларакан Вячеслав Замков механизатор. Тракторист удостоверенине 1971 çулта илнĕскер хыçа юлнă 41 çул хушшинче миçе гектар çĕр улми кăларнă-ши? Ку ыйту çине нумай тесе хуравларĕ çеç Вячеслав Николаевич.

– Ĕлĕкрех çĕр улми пуссисем пысăкрахчĕ. Ĕçлекенĕсем те ытларахчĕ. Ĕç вăйĕ сахалланнипех кăçал 20 гектар ытларах çеç çĕр улми лартрăмăр. Юрать Орининти, Муркашри, Москакассинчи вăтам тата Атапайри тĕп шкулсенчи аслă классенче вĕренекенсем пысăк пулăшу пачĕç. Пĕрлехи тăрăшулăхпа кĕске вăхăтрах çĕр улми кăларса пĕтертĕмĕр, – калаçăва хутшăнчĕ В. Замковăн механизатор династине малалла тăсакан ывăлĕ Валерий **(иккĕмĕш сăн ӳкерчĕкре)**.





Хирте михĕсене пуçтарнă «иккĕмĕш çăкăра» Н. Волков, В. Ботников, С. Иванов, М. Колбасов, В. Колбасов, И. Ершов водительсем çийĕнчех пусăсене турттарса тăчĕç. Кунта вара çĕр улми тиекенсем те ырă сăмаха тивĕç.

– Ялта пурăнакан çăмăл ĕç мĕнне пĕлмест. Вырма вĕçлерĕмĕр, çĕр улми хирĕ те пушанать. Уяр кунăн кашни сехечĕ шутра. Ĕçсене вĕçлесен кану пулĕ те. Çакна ăнланса ĕçлетпĕр паян, – терĕ çĕр улми миххисене автомашина çине тиенĕ хушăра В. Васильев (**пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре**).

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

**Район уй-хирĕсенче**

## Уяр кун хыпалантарать

Авăн уйăхĕн 21-мĕшĕ тĕлне районти ял хуçалăх предприятийĕсенче кĕрхи уй-хир ĕçĕсем тулли хăватпа малалла пычĕç. Пурнăçланă ĕçсем сахал мар, анчах тумалли те нумай. Çапла пĕтĕмлетес килет район администрацийĕн экономикăпа АПК аталанăвĕн пайне пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчен тăратнă оперативлă кăтартусене тишкерсен. Вĕсемпе килĕшӳллĕн асăннă кун тĕлне районти çĕр ĕçченĕ 12117 гектар çинче (95 процент) тыр-пул вырас ĕçе вĕçленĕ. Хиртен пурĕ 20663 тонна тырă кĕнĕ. Гектар пуçне тивекен вăтам тухăç – 17,1 центнер. Хуçалăхсенче «иккĕмĕш çăкăра» 420 гектар (42 процент) кăларнă. Çĕр улмин вăтам тухăçĕ гектар пуçне 163 центнерпа танлашать.

**Хамăр инф.**

**Республикăра**

## «Эпир пулăшма хатĕр»

Сентябрĕн 20-мĕшĕнче Чăваш Республикине Раççей Федерацийĕн регионсен аталанăвĕн министрĕн çумĕ Сергей Дарькин ĕçлĕ визитпа килнĕ. Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар объекчĕсене çитсе курнă. Вăл «Исследовательский центр «Бреслер» тата «Экра» наукăпа производство предприятийĕ» чикĕллĕ яваплăхлă пĕрлешӳсенче пулса курнă. Хыççăн пысăк хăна Шупашкарти стройкăсенче, çавăн пекех «Çĕнĕ хула» объекчĕсенче те пулнă. Çĕнĕ Шупашкарти çӳп-çап полигонĕ, хĕвел модулĕсем туса кăларакан предприяти проекчĕсемпе тата «Водоканал» муниципаллă пĕрлешӳ ĕçĕпе паллашнă.

«Пур объект та пĕлтерĕшлĕ шутланать, çавăнпа та эпир вĕсене пулăшма хатĕр. Чăваш Енĕн ыттисенни пек хăйĕн газ, нефть çук, апла пулин те вăл çителĕклĕн аталанса пырать. Республика аталану стратегийĕ тĕлĕшĕнчен тĕрĕс çул суйласа илнĕ», – çапла хак панă Сергей Дарькин.

Çӳп-çап полигонне тата ун тавра çул тăвасси чылай укçа-тенкĕпе çыхăннă. Çавăнпа та министр çумĕ çак объекта федерацин инвестици фондне кĕртме сĕнессине тата пулăшассине пĕлтернĕ.

«Çĕнĕ хула» проектпа паллашнă май С. Дарькин вăл чăнах та халăха кирлине палăртнă. Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев çитес çул Çĕнĕ хулара 20 пин тăваткал метр ытла çурт-йĕр тума палăртнине пĕлтернĕ. Малашне сахал тупăш илекен йывăр çемьесене çĕнĕ йышши хваттерсемпе пĕчĕк хаксемпе тивĕçтерес ыйту çине пысăк тĕллев лартнине каланă. Çакă вăтам класс та пахалăхлă пурăнмалли çурт-йĕр туянма пултарассипе çыхăннă. Ку вара С. Дарькин ĕçлĕ визит вăхăтĕнче республика Пуçлăхĕпе сӳтсе явма палăртнă ыйтусенчен пĕри пулнă та.

**Вăхăтлă ĕç**

## Çитес çулхи тухăçшăн

Вырма пынă хушăрах ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем кĕр аки валли çĕр хатĕрлессипе çанă тавăрсах ĕçлерĕç. Ĕнерхи куна çĕр ĕçченĕ акана хатĕр 4218 гектара шуратса хăварма ĕлкĕрчĕ. Ку вăл планпа пăхнин 76 проценчĕ. Планпа пăхнинчен ытларах акма пултарнисем: «Восток» (180 гектар – 138 процент), «Путь Ильича» (400 гектар – 133 процент), «Передовик» (325 гектар – 325 процент).

**Хамăр инф.**

**Кĕскен**

## Çĕнĕ çул уявĕнче вунă кун канатпăр

Ĕç тата ĕçпе тивĕçтерекен федераллă служба 2013 çулта çĕнĕ çулхи уяв кунĕсем 10 куна пырасси çинчен пĕлтернĕ.

Шăмат кун, декабрĕн 29-мĕшĕнче, ĕçлемелле пулать. Уншăн тунти кун, декабрĕн 31-мĕшĕнче, канатпăр.

Пĕтĕмĕшле вара 2012 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕнчен пуçласа 2013 çулхи январĕн 8-мĕшĕччен – кану кунĕсем.

**Информаци кунĕ**

## Çул ыйтăвĕ ытларах пăшăрхантарать

Сентябрĕн 19-мĕшĕнче районта пĕрлехи информаци кунĕ иртрĕ. Калаçу муниципаллă пурлăхпа тата çĕр лаптăкĕсемпе эффективлă усă курасси, ял хуçалăх ярмăркки йĕркелесси пирки, уй-хир ĕçĕсем пыни çинчен тата ытти ыйту тавра пулчĕ.

Информаци кунне хутшăннă Чăваш Республикипе Шалти ĕçсен министерствин экономика тĕлĕшĕнчи хăрушсăрлăх тата коррупцие хирĕç кĕрешес ĕç управленийĕн ертӳçин çумĕ А. Ботин, район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ В. Ананьев, район администрацийĕн пурлăхпа çĕр хутшăнăвĕсен пайĕн ертӳçи И. Захаров Катькас ял тăрăхĕнче пулчĕç, кунти ĕçхĕлпе паллашрĕç, çынсене пăшăрхантараканни тавра калаçрĕç.

Ку тăрăхра пурăнакансене уйрăмах çул-йĕр ыйтăвĕ хумхантарать. Пирĕнтен чылайăшĕ федераллă автоçул çинчи автотранспортăн Калмăккасси ялĕ çывăхĕнчи яланхи капланăвне курнă ĕнтĕ. Çавна май вăхăта сая ярас мар текенсем Мăн Сĕнтĕр – Катькас маршрутпа çӳреççĕ. Автотранспорт хатĕрĕсем, уйрăмах пысăк тиев турттараканнисем, кунта тăтăшах йышлă. Çавна май кунта нумай пулмасть тунă республика пĕлтерĕшлĕ çул-йĕр çинче япăхнă вырăнсем чылай. Ăна юсассишĕн вара кам ответлăши тата хăçан вĕçленĕ ку йĕркесĕрлĕх? Çакăн пек ыйту пулчĕ вĕсен чи малтан. Унтан та хăрушăраххи – кунта инкексинкек çын сывлăхне хавшатма тата кун-çулне татма пултарасси.

– Ку лару-тăру тĕлĕшпе республика шайĕнче ятарлă комисси йĕркеленĕ, вăл пĕтĕмĕшле ĕç-хĕле тивĕçлĕ хак парĕ, сирĕн пăшăрханăвăр аякра юлмĕ, – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ В. Ананьев.

Çавăн пекех ку тăрăхри ялсенче пурăнакансене федераллă трасса çинчи обществăлла автотранспортăн хăшпĕр чарăнăвĕсем, çул урлă каçмалли вырăнсем хумхантараççĕ. Акă, тĕслĕхрен, Шомик ялĕ çывăхĕнчи чарăнăва малтанхи вырăнтан самай аякка куçарнă. Кунта вара ачасем те, ватă çынсем те йышлă çӳреççĕ. Çитменнине тата Катькас ял тăрăхĕнчи пĕр çыхăну уйрăмĕ ĕçлеме пăрахнă. Çавăнпа та газшăн, çутăшăн тӳлеме çынсен каллех аслă çул çине тухас пулать. Пĕтĕмĕшле илсен вара çул-йĕр çинчи лару-тăру çивĕчленсех пырать.

Кун йĕркинчи тепĕр ыйту вăл – çĕрпе эффективлă усă курасси. Çакăн пирки район, республика тулашĕнче тăтăшах калаçаççĕ, сăлтавĕ вара ăна валли çителĕклĕ. Пусă çаврăнăшне кĕртмен, усă курман пай çĕрĕсен лаптăкĕсем, çавна май çын çӳллĕш çум курăк ешерекен уй-хирсем паян сахал мар. Çакна эпир хамăр иртсе пынă самантра та аван куртăмăр.

–Уйрăмах пай çĕрĕсем пирки палăртса хăварас килет. Ăна харпăрлăха куçарассине, арендăна парассине е унпа усă курма килĕшмессине çитес вăхăтра татса памалла, – терĕ республика представителĕ А. Ботин. Харпăрлăха куçарнисен те алăра документ пур-ха, çĕр манăн тесе лăпланма кирлĕ мар. Енчен те çĕрпе тĕллевлĕ усă курмасан, унпа сыв пуллашма та тивет.

Тепĕр самант вăл – 0,6-шер гектар çĕре аренда килĕшĕвĕ тăвасси. Районта унпа чылайăшĕ тивĕçлĕ документсăр усă курать.

– Хальлĕхе ку енĕпе Шомик тăрăхĕсем активлă ĕçлеççĕ. Ыттисене те ку ыйтăва кĕске самантра татса пама ыйтатăп, – терĕ район администрацийĕн пурлăхпа çĕр хутшăнăвĕсен пайĕн ертӳçи И. Захаров.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Саламлатпăр**



Юратнă çыннăмăра, хисеплĕ аттене – Калайкассинче пурăнакан **Владимир Васильевич ЛЮЦЕВА** 55 çул тултарнă ятпа ăшшăн, пур кăмăлтан саламлатпăр. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн. Эсĕ пурри пирĕншĕн пысăк телей тата пуянлăх. Эпир санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн савăнатпăр. Пурăн эсĕ çĕр çул савăнса, пире юратса.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕ, ывăлĕ, хăти-тăхлачисем тата мĕн пур тăванĕ.**



Хаклă çыннăмăра, кăмăллă мăшăра, юратнă аттене, ăшă чунлă кукаçие – Ярапайкасси ялĕнче пурăнакан **Иван Константинович ПОРТНОВА** 65 çулхи юбилей ячĕпе чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, юхан шыв пек вăрăм кун-çул, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, иксĕлми телей сунатпăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн телей, савăнăç. Эпир санпа мухтанатпăр, эсĕ пурришĕн савăнатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, 2 хĕрĕ, 2 кĕрӳшĕ, 4 мăнукĕ, тăванĕсем.**

**Çырăнтару – 2012**

## Хаклă вулаканăм!

**Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2013 çулхи январьтен илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.**

**Вулакансене эпир пĕлтернĕччĕ, июль уйăхĕнчен шăмат кунсенчи кăларăм 8 страницăпа тухма пуçларĕ.**

**Райхаçат редакцийĕ.**

# Кун йĕркинче – ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсем

Пирĕн интервью

***Хаçат редакцине ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсен пайĕ шучĕпе çĕр участокĕсем виçсе илессипе ыйтусем нумай килеççĕ. Вĕсем çине тĕплĕ хуравсем шыраса эпир Чăваш Республикин пурлăхпа çĕр хутшăнăвĕсен министрне Светлана Енилинăна калаçăва чĕнтĕмĕр.***

**– Светлана Александровна, пĕрремĕш ыйтăва Мария Ивановăран илтĕмĕр: «Хăй вăхăтĕнче пирĕн колхоз ĕçченĕсене пĕр хирте çĕр уйăрса пачĕç. Пĕр-икĕ çул каялла эпир 6 çын çав пай çĕрĕсене хамăр харпăрлăха саккунлă куçарма пуçларăмăр, анчах ĕçе вĕçне çитереймерĕмĕр. Çак хушăра çĕр законодательствине улшăнусем кĕртнĕ тенине те илтрĕмĕр. Çав çĕре уйăрса илсе хамăрăн харпăрлăх пайĕ туса хума паян пирĕн мĕн тумалла?»**

– Республикăри çĕр ĕçченĕсемшĕн ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсемпе ĕçлесси тата кунти улшăнусемпе тан пырасси паян кун йĕркинче малти вырăнта тăрать. Сирĕн ыйтуран эпĕ çакна ăнлантăм. Мария çĕр лаптăкне ытти пайçăсемпе пĕрле уйăрса илесшĕн. Çак лару-тăрура унăн вырăнти ял тăрăхĕн администрацине ыйтса çырмалла. Унта çĕр пайçисен пĕрлехи пухăвне ирттересси пирки пĕлтерни пулмалла.

Ял тăрăхĕн администрацийĕн пуху ирттерессине йĕркелемелле. Пухура пайçăсем çĕр лаптăкĕн вырăнне, виçев проектне тата çĕр уйăрса илме кăмăл тунă пайçăсен списокне палăртаççĕ. Çак пухурах пайçăсем хăйсен интересĕсене хӳтĕлекен уполномоченнăй çынна суйлаççĕ. Уполномоченнăй обязанноçне кадастр инженерĕпе килĕшӳ тăвасси кĕрет.

Вăхăт иртсен ирттернĕ тепĕр пухура пайçăсем çĕр виçес проекта çирĕплетеççĕ, кун пирки пуху протоколне çырса хураççĕ. Çакăн хыççăн кадастр инженерĕ кадастр ĕçĕсене пурнăçлать те çĕр виçнин (межевой) планне хатĕрлет.

Алăра çĕр виçнин (межевой) планĕ пулсан Мария хăйĕнпе килĕшӳллĕ пайçăсемпе «Росреестрăн федераллă кадастр палати» ФГБУ филиалне е Чăваш Республикинчи Росреестр Управленине çĕр участокне патшалăх кадастр учетне тăратса ун тĕлĕшпе хăйĕн харпăрлăх правине регистрацилеме ыйтма пултарать.

**– Сергей Владимирович пенсионера вара пай çĕрĕн тивекен çĕр участокне хăйĕн çине регистрацилесси пăшăрхантарать. Ĕçсене мĕнле тусан мана лайăхрах пулать тет вăл.**

– Кунта лару-тăру чылай ансатрах. Сергей Владимировичăн кадастр инженерĕпе çĕр виçевĕн проектне тума тата кадастр ĕçĕсем пурнăçлама килĕшӳ тумалла. Кун пек чухне çĕр участокне йĕркелесси тата тухса тăракан ытти ыйтусене татса парасси пĕтĕмпех кадастр инженерĕн тивĕçĕ пулать.

Ĕçсене пурнăçласан пенсионерăн «Росреестрăн федераллă кадастр палати» ФГБУ филиалне е Чăваш Республикинчи Росреестр Управленине çĕр участокне патшалăх кадастр учетне тăратса ун тĕлĕшпе хăйĕн харпăрлăх правине регистрацилеме ыйтмалла.

**– Шупашкарта пурăнакан П. Николаева асламăшĕнчен еткере юлнă çĕрпе усă курмасан хăйне мĕнле айăплав лекесси пăшăрхантарать.**

– Харпăрлăхра çĕр тытакан, анчах унпа усă курман «хуçасене» айăплассине те саккунта пăхса хăварнă. Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕр участокĕсемпе саккунпа пăхнă пек вăхăтра усă курмасан граждансене 2 – 5 пин тенкĕ, ĕçри çынсене 4 – 6 пин тенкĕ, юридически лицосене 80 – 100 пин тенкĕ штраф тивет.

**– Хăйне палăртман вулавçăна вара усă курман е тĕллевсĕр усă куракан çĕрсене каялла туртса илме пултарни интереслентерет**.

– Çапла, çĕрсене туртса илес йĕрке пур. Ку ĕçе суд решенийĕпе пурнăçлаççĕ. Çакăнти нормăсене 2010 çулхи раштав уйăхĕн 29-мĕшĕнче йышăннă 435-мĕш номерлĕ федераллă саккунта пăхса хăварнă.

**– Светлана Арзамасова çапла çырать: «Хăй вăхăтĕнче колхоз уйăрса панă пай çĕрĕпе тĕллевлĕ усă курмастăп. Анчах уншăн çĕр налукне çулленех вăхăтра тӳлесе тăратăп. Çав пай çĕрĕнчен епле хăтăлмалла-ши?»**

– 2011 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнче «Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсен пусă çаврăнăшĕ çинчен» Федераллă саккуна улшăнусем кĕртрĕç. Унта çĕр участокĕ тĕлĕшпе тунă харпăрлăх правинчен пăрăнассине ансатлатнă.

Маларах йышăннă çĕр пайĕпе усă курас теменнисен çакăн пирки Чăваш Республикин Росреестр Управленине ыйтса çырмалла. Енчен те вăл çĕр участокне çирĕплетнĕ йĕркепе регистрацилемен пулсан çав çĕр участокĕпе усă курма ирĕк панă документа та пĕрле тăратмалла. Енчен те пай çĕрĕ тĕлĕшпе харпăрлăх правине Пĕрлехи патшалăх реестрĕнче регистрацилемен пулсан харпăрлăх правине регистрацилемесĕрех пĕтерме пултараççĕ.

Кунпа пĕрлех пай çĕрĕ тĕлĕшпе граждансем ыйтнипе харпăрлăх правине пĕтернине регистрацилесен пай çĕрĕ вырнаçнă çĕрти ял тăрăхĕн вырăнти самоуправлени органĕн ун тĕлĕшпе муниципаллă харпăрлăх прави вăй илет.

Куратăр пулĕ, пай çĕрĕнчен хăтăлас процедура ансат тата тӳлевсĕр: кунашкал услугăшăн патшалăх пошлини те тытмаççĕ.

**– Калаçăва хутшăннăшăн тавтапуç. Пай çĕрĕсем тĕлĕшпе ыйтусем пулсан Сирĕнпе татах çыхăнăпăр.**

– Пирĕн енчен хирĕçлев çук.

**А. ПЕТРОВ калаçнă.**

Информаци кунĕ

# Шкулсен малалла туртăнас кăмăл пурах

Юн кунхи пĕрлехи информаци кунĕнче республикăн вĕрентӳпе çамрăксен политикин министрĕн çумĕ Н. Дмитриева ертсе пыракан ушкăн вĕрентӳ учрежденийĕсенчи лару-тăрупа паллашрĕ.

Муркашри вăтам шкулта кăçал пурнăçланă тата халĕ пыракан юсав ĕçĕсемпе кăсăкланчĕç ертӳçĕсем. Кăçал шкулта çак ĕçсене пурнăçлама пысăк укçа-тенкĕ уйăрса панă.

Шкулсенчи апат блокĕсене оптимизацилес программăпа килĕшӳллĕн Муркашри вăтам шкул столовăйне тĕпрен юсаса çĕнетрĕç. Программăпа палăртнă тăрăх столовăй валли сĕтел-пукан туяннă. Апат хатĕрлемелли çĕнĕ оборудовани те кĕçех килмелле.

Сĕтелсем шкула çитнĕ. Анчах та хĕрлĕсарă илемлĕ сĕтел çийĕсем виççĕмĕш куннех хăмпăланса тухнă мĕн. Сĕтелсемпе тивĕçтерекен çакна çилĕм пахалăхсăррипе ăнлантарса сĕтелсене ылмаштарса пама шантарнă-ха. Анчах та тата тепĕр ыйту тухса тăрать шкул умне: халĕ «Роспотребнадзор» шкулти столовăйсенчи пукансене сĕтел çумне çĕклесе кĕртсе хума ыйтать иккен. Урай çунă чух вĕсене сĕтел çине çавăрса хума юрамасть. Апла шкул администрацийĕн сĕтел-пуканпа çыхăннă ыйтăва кĕске вăхăтрах татса памалла.

Муркашри вăтам шкула пирĕн районти сывлăх тĕлĕшпе хевтесĕр ачасем çӳремелли база шкулĕ тесе çирĕплетнĕ. Çапла вара «Доступная среда» федераллă программăпа килĕшӳллĕн 2 миллион ытла тенкĕ уйăрса панă: федераци тата республика бюджечĕсенчен 50-шар процент.

Çак программăпа килĕшӳллĕн шкулта пандус тунă, колясккăпа çӳрекенсем валли туалетсем, гигиена пӳлĕмĕ тата оборудовани упрамалли пӳлĕме туса пĕтермен-ха. Н. Дмитриева инвалид ачасем алăксене колясккăпа ирĕклĕн кĕрсе тухма пултарассипе интересленчĕ – строительсем инструкципе килĕшӳллĕнех ĕçлеççĕ. Кĕçех шкула ятарлă оборудовани килмелле. Ăна вырнаçтармалли пӳлĕм хальлĕхе хатĕр мар-ха. Килĕшӳре ĕçсене сентябрĕн 29-мĕшĕччен вĕçлеме палăртнă. Строительсем палăртнине пĕтĕмпех вăхăтра туса пĕтерме шантарчĕç.

Муркашра тепĕр ача сачĕ кирли пирки калаçу чылай пулнă хыççăн пăртинех тапранчĕ. Ку таранччен лицей вырнаçнă çурта ача сачĕ валли реконструкцилес ĕçсем пыраççĕ. Информаци ушкăнĕ çитнĕ вăхăтра 12 рабочи ĕçлетчĕ. Ушкăн бригадирĕ лайăх çанталăк тăнă чух пристрой тăвассипе тимлемеллине каларĕ. Фундамент валли пĕтĕмпех хатĕр, хăйăр турттарса килессине кĕтеççĕ строительсем. Стройматериалпа вăхăтра тивĕçтерменни вара ура хурать. Вăхăта сая ямасăр халĕ шалти конструкцисене пăсаççĕ.

Кашмашри тĕп шкул шăпипе те ыйту çивĕч тăрать. Çавăнпа та информаци ушкăнĕ шкулăн кашни кĕтесĕпех тĕплĕн паллашрĕ. Кунта паян 75 ача вĕренет. Ачасен йышĕ чакмĕ-и? Çĕнĕ шкул тумалла е çук? Тен кунти информаципе культура центрĕн çурчĕ вырăнлă пулĕ? Унта та çитсе килчĕç ертӳçĕсем. Лаптăк çителĕксĕр. Çĕнĕ урамсем енче шкул тумаллах пулсан асфальт çул та кирлĕ. Тăкак чылай. Ятарлă программăсем пулмасан ял тăрăхĕ вăй çитерĕ-и? Ыйтăвĕ çинеçинех тухса пырать. Анчах та Н. Дмитриева : «Çакăн пек кивĕ çуртсене питĕ тирпейлĕ те хăтлă тытма пултарни савăнтарчĕ. Кунта курнинчен чылай япăхрах пулĕ тесе шутланăччĕ», – тени те Кашмашсемшĕн ку лару-тăрура питĕ пĕлтерĕшлĕ пулчĕ.

Шетмĕпуçĕнчи тĕп шкулта та кăçал юсав ĕçĕсем пысăк калăпăшлă иртрĕç. Тĕрĕсрех каласан вĕсем халĕ те иртеççĕ. Шкулăн çивиттине, чӳрече блокĕсене çĕнетнĕ, пандус тунă, çуртăн пĕр енчи стенине çĕнĕрен купаласа хăпартнă. Анчах та вĕçне çитереймен ĕç кунта та сахал мар. Хăшне-пĕрне пурнăçлама ашшĕамăшĕ пулăшу кӳме шантарнă. Хальлĕхе вĕсем кĕрхи тухăçа пухассипе тимлеççĕ. Анчах та министр çумне ку хурав тивĕçтермерĕ. Ĕçсене вăхăтра пурнăçламаллине, апла пулсан шкул администрацийĕн подрядчиксемпе çирĕпрех ĕçлемеллине Муркашри шкулта та, Шетмĕпуçĕнче те пĕрре мар асăрхаттарса каларĕ вăл.

Пĕтĕмĕшле вара вĕрентӳ учрежденийĕсем юсав ĕçĕсене уйăрса панă укçа-тенкĕпе тĕллевлĕ усă курнă. Май тупса хушма ĕçсем те пурнăçланă. Апла пулсан шкулсен малалла туртăнас кăмăл пурах.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Пресс-конференцирен

# Суйлав тĕрĕс иртмелле

Октябрĕн 14-мĕшĕнче суйлав пулать. Пирĕн районта Муркаш, Чуманкасси, Йӳçкасси ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене суйлатпăр.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев сентябрĕн 6-мĕшĕнче Правительство çуртĕнче ирттернĕ пресс-конференцире суйлавпа çыхăннă ыйту та хускалчĕ. Çак саманта палăртмасăр иртес килмест. 2011 çулхи декабрь, 2012 çулхи март уйăхĕсенчи суйлавсене пĕтĕмлетнĕ май Чăваш Ене ăнăçлă регионсен шутне кĕртнĕ. Унта ку енĕпе массăллă ултав-суяпа усă курман, йĕркесĕрлĕх тĕл пулман.

**Ыйту: Михаил Васильевич, эсир октябрь уйăхĕнчи суйлав тĕрĕс те усă иртессе шанатăр-и? «Административлă ресурс» çитес суйлав ĕç-хĕлне чăрмав кӳмĕ-и?**

– Федераллă саккун улшăннипе çитес суйлавра хăш-пĕр хушма çĕнĕлĕх пулса иртмелле. Çын вăл е ку кандидата суйласси вара чи малтан унран хăйĕнчен килет. Кунта нимĕнле хĕсĕрлев те пулма пултараймасть. Çапах та çакăнта пропаганда, агитаци, суйлавçăна сĕнекен тĕрлĕ программа витĕмĕ пĕлтерĕшлĕ.

Тĕп суйлав комиссине халĕ çĕнĕ йышран йĕркеленĕ. Суйлав тапхăрĕнче суд, прокуратура органĕсене тĕрлĕ çăхав çырнисем пулнă. Мана та пĕр политика партийĕ вĕсен ят-сумне вараланă тесе суда панăччĕ. Нумаях пулмасть асăннă ĕçе кассаци инстанцийĕнче пăхса тухрĕç, суд вĕсен ыйтăвне тивĕçтермерĕ, мана тӳрре кăларчĕ. Çавăнпа та кирлĕ-кирлĕ мартан тĕрлĕ пăтăрмах шырама, суд процесĕсене çӳресе хаклă вăхăта сая яма кирлĕ мар.

Манăн тĕрĕслĕх позицийĕ çирĕп, ăна муниципалитет ертӳçисем аван пĕлеççĕ. Чи малтан вара вĕсем вырăнти суйлав ĕçĕшĕн ответлă. Саккуна епле пăхăннине прокуратура, йĕркене сыхлакан органсем çирĕп тĕрĕслеççĕ.

Административлă ресурсăн уссинчен сиенĕ ытларах. Çавăнпа та вăл суйлав ăнăçлăхĕпе пачах та çыхăнман. Кирек епле суйлав та уççăн тата тĕрĕс иртмелле.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Пенси ыйтăвĕсемпе

# Соцпакет е укçа?

Федераллă çăмăллăхсемпе усă куракан граждансен çитес çул валли соцпакет е укçа тӳлевне суйласа илессине октябрĕн 1-мĕшĕччен палăртмалла. Çак категорири çыннăн хăйĕн хальхи ку тĕлĕшри йĕркине улăштарас кăмăл пулсан çеç заявлени çырмалла. Калăпăр, вăл халĕ çăмăллăхсем вырăнне укçăн илсе тăрать, анчах та çитес çултан çăмăллăхсемпе усă курма пуçласшăн е тепĕр майлă. Çăмăллăхсемпе усă куракан хальхи йĕркене пенсионер улăштарасшăн мар пулсан унăн Пенси фондне пыма кирлĕ мар.

Паянхи куна пирĕн районта федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансем 3 пин те 80 çын. Ку категорие Аслă Отечественнăй вăрçă инвалиĕсемпе участникĕсем, çапăçăва хутшăннă ветерансем, вăрçă ветеранĕсен тăлăх арăмĕсем, радиаци катастрофисене пула шар курнă граждансем кĕреççĕ. Соцпакетпа е ун пайĕпе усă куракансем 764 çын.

Çулталăк пуçланнăранпа районта соцпакетпа пачах е унăн пĕр пайĕпе усă курма пăрахасси пирки 128 çынран заявлени йышăннă. Укçа вырăнне соцпакетпа пăхнă çăмăллăхсемпе е вĕсен пĕр пайĕпе çĕнĕрен усă курма пуçăнасси пирки 15 заявлени пулнă.

Соцпакет пĕтĕмĕшле 795 тенкĕ те 88 пуспа танлашать. Вăл шутран эмел пайĕ (тухтăр рецепчĕпе эмел тӳлевсĕр илесси) – 613 тенкĕ, санаторипе курорт пайĕ (тухтăр сĕннипе санаторие кайма путевка илесси) – 94 тенкĕ те 83 пус, транспорт пайĕ (хула тулашĕнчи поездпа тӳлевсĕр çӳресси, сипленме тӳлевсĕр кайса килесси) – 88 тенкĕ те 05 пус.

**Н. СЕМЕНОВА,**
**РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ.**

Редакци почтинчен

# Тавах сире, ырă çынсем

***Редакцие Мускав хулинчен çыру килчĕ. Çыру авторĕ ăна хаçатра пичетлеме ыйтса çырнă.***

Хисеплĕ редакци!

Мускав хулинчен чĕререн хĕрӳллĕ салам!

Эпир сирĕн хаçата вуласа сирĕнпе пĕрле савăнатпăр, хурланмалли пулсан – пĕрле хурланатпăр. Тавтапуç сире хыпарсене вăхăтра пĕлтерсе тăнăшăн.

Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Ойкас ялĕнче Маргарита Викторовна Пайкова пурăнать. Мăн Сĕнтĕрти больницăра ăста медсестрасенчен пĕри вăл. Хăй пурăнакан ялти çынсене те пулăшсах тăрать. Ял-йыш та унăн пултарулăхĕпе мухтанать. Тавтапуç сире, Маргарита Викторовна. Мухтав сире.

Тепĕр лайăх çынна та хаçат урлă тав сăмахĕ калас килет – Ольга Суворова вăл. Ун патне Мускавран шăнкăравласан яланах хитре, çемçе, кăмăллă сасăпа калаçать. Унпа калаçакан кирек епле çыннăн та чĕри савăнать пулĕ.

Сывлăх сунатăп сире, ырă çынсем. Телейлĕ те вăрăм кун-çуллă пулăр.

**К. ТРОИЦКАЯ.**

Мускав хули.

Граждансене йышăнаççĕ

# Сирĕн ыйтусем пур-и?

**Район прокуратурин Муркаш ялĕнчи Мир урамĕнчи 6-мĕш çуртĕнче граждансене хăйсене интереслентерекен ыйтусемпе Раççей Федерацийĕн следстви комитечĕн Чăваш Республикинчи следстви управленийĕн ертӳçин тивĕçне пурнăçлакан А. Митин юстици полковникĕ сентябрĕн 26-мĕшĕнче 10 сехетрен пуçласа 12 сехетчен йышăнать.**

Вулакан калаçăва чĕнет

# Шкулта автодело урокĕсем уçмаллах

Халăх тăнлансах пырать. Хура тар тăкса пурнăç тăвас текенсем сахаллансах пыраççĕ. Аслă пĕлӳ илсе хул хушшине папка хĕстерсе çӳресшĕн. Хитре калаçма хăтланса çеç лараççĕ. Чиновника тухнă карма çăварсем йышлансах кайрĕç. Вĕсемшĕн чи хакли – чаплă отчет парса хăйсенчен çӳлерех ларакан бюрократ умĕнче ырă ят илесси. Ĕçĕ пур-и, çукки – хумхантармасть.

Совет влаçĕ вăхăтне тепĕр ăçтиçуксем хурлама хăтланаççĕ. Вĕсен тăнсăр сăмахĕсене хăлхана чикмесĕр шутласа пăхăрха, мĕн чухлĕ ырă ĕç тунă вăл вăхăтра тата мĕн чуль кутала ĕç хальхи вăхăтра тăваççĕ. Хамăр районтах совет влаçĕ вăхăтĕнче вуншар шкул уçнă пулсан халĕ вуншар шкул хупма хăтланаççĕ. Совет шкулĕнче вуншар кружок пулнă пулсан халĕ аран-аран темиçе кружок йĕркелеççĕ. Тĕлĕнмеллипех тĕлĕнетĕп хăш чухне.

Ĕç тĕлне пĕлмесĕр иккĕмĕш ăру çитĕнет. Вăйне ниçта чикеймеççĕ. Ăçта каймалла ачасен? Мĕнпе вăхăта иртермелле? Юрать компьютер умĕнче ларма май пулчĕ. Муркаш ялĕнче хăш-пĕр кунсенче пĕр ача та курăнмасть – пурте компьютерпа выляççĕ. Анчах компьютер умĕнче кăна ларнин усси çук ĕнтĕ. Сиенĕ те тем чухлех. Çавăнпа ачасене нумайланса пыракан пушă вăхăта усăллă иртерме пулăшмалла. Нумайрах кружоксем, секцисем уçмалла. Паллах, хĕр ачасем валли ташă ушкăнĕсем, вокал кружокĕсем, хорсем, çĕвĕ кружокĕсем, тĕрлемелли кружоксем пур. Эрнере виçĕ урок физкультура тунă хыççăн шкулсем «ташлаççĕ». Анчах арçын ачасем валли интереслĕ кружоксем çитмеççех. Арçын ачасене мĕн кирлĕ? 90 процентĕ техника кружокĕсем кирлине палăртать. Ачасем велосипедпа, мопиксемпе, мотоциклсемпе ярăнма юратаççĕ. Анчах пирĕн районти шкулсенче ни трактор, ни автодело урокĕсем ирттермеççех тетĕп. Пĕр-ик шкулта трактор вĕренни вăл ячĕшĕн çеç.

Çав вăхăтра çул-йĕр правилисене пĕлмен ачасем мопиксемпе аварие лексе аманни-сусăрăнни çинчен час-часах илтетĕн. Муркаш енче те мĕн чухлĕ ача мопиксемпе ĕрĕхтерсе çӳрет. Çул çинче хăйсене мĕнле тытмаллине кам вĕрентет вĕсене? Мĕншĕн кашни шкулта уроксенче вĕрентмелле мар?

Тата автошкулсенчен вĕренсе тухнисем машинăпа çӳреме пĕлмесĕрех правасем илсе аварие туни çинчен пĕлтереççĕ. Мĕншĕн ачасене 100 процентĕпех ахаль шкултах автодело вĕрентмелле мар? Кам хирĕç? Ачасем – çук! Ашшĕ-амăшĕ – çук! Çуран çӳрекенсем – çук! Водительсем – çук! Камсем? Чиновниксем!!!

Чиновниксен лицензи илмелле. Ĕçлес мар тесе çĕр сăлтав шыраççĕ. Е укçи çук, е çынни çитмест, е тата тем те пĕр.

Автодело урокĕсене е трактор вĕрентме кăмăл пурри çитмест. Вĕрентӳ бази кирлĕ. Ăçта чиксе пĕтерчĕç вĕрентӳ базине? Кашни шкулта, çапла, районти кашни вăтам шкулта, трактор е автодело кабинечĕсем пулса. Мĕншĕн вĕсене антăхса кайсах пĕтерчĕç? Муркаш шкулĕнче пиншер ача автодело вĕренчĕ. Республикăри шкулсенчен тĕрлĕ делегаци килсе автодело кабинетĕнче Герман Ананьевич Малыгин вĕрентекенĕн опычĕпе паллашатчĕç. Кама «ыраттарчĕ» Муркаш шкулĕнчи автодело кабинечĕ? Мĕншĕн тĕпренчĕкшер пухнă ĕçлекен модельсене чӳрече витĕр кăларса пăрахнă? Кама чăрмантарнă автодело кабинечĕ? Кама? Ĕç тĕлне пĕлмен чиновниксене!!!

Трактор вĕрентме кашни шкултах тракторсем пурччĕ. Ăçта кайса кĕчĕ трактор паркĕ? Салатма пит çăмăл, пуçтарма йывăр. Экономи тумалла тесе лăпкă пурнăçпа пурăнмалла мар.

Шупашкарта икĕ инженер класĕ уçнă тет. Мĕншĕн пирĕн районта çавăн пек классем уçмалла мар?

Ялсенче ĕçлеме тракторист-шофер çитмест, эпир юрист, экономист штамплатпăр. Кайран çак аслă пĕлӳ илнĕ менеджерсемпе управленецсем тепĕр хут рабочи специальноçне вĕренме каяççĕ. Капла тĕрĕс мар. Акă эпĕ шкулта вĕреннĕ чухнех тракторист правине илнĕ тата каменщика вĕренсе тухнă. Тракторпа икĕ кун ĕçлесе пăхрăм та ку ĕç мана килĕшменнине ăнлантăм. Каменщикра çур çул ĕçлерĕм те тин аслă пĕлӳ илес тесе вĕренме кайрăм. Анчах шкулта илнĕ специальноçсем маншăн пурнăçра ытлашши пулмарĕç. Тата мĕн чуль ача хăй пурнăçне ял хуçалăхĕпе çыхăнтарчĕ.

Çавăнпа çирĕплетсе калатăп: районти шкулсенче технологи урокĕсенче ачасене трактор, автодело е мотодело вĕрентмеллех.

**О. ТАРАСОВ.**
Москакасси шкулĕ.

# Професси аттестатран маларах илме пулать

Район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх шкулсенче професси хатĕрленĕвĕ РФ Вĕрентӳ тата наука министерствин 2006 çулхи июнĕн 21-мĕшĕнчи çырăвĕ çинче никĕсленет. Унпа вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнипе пĕрлех алла хăш-пĕр професси илнине çирĕплетекен документ илме май пуррине палăртнă. Çапла майпа шкулта аслă классенче вĕренекенсем тракторист, повар, çĕвĕç, штукатур, плиточник, каменщик, ЭВМ операторĕн профессийĕсене вĕренме пултараççĕ. Кунта асăннă енсемпе профессие вĕрентес тесен пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсен лицензи илмелле.

– Паянхи кун ял хуçалăх предприятийĕсенче, фермер хуçалăхĕсенче трактористсем çитмен ыйту çивĕч тăрать. Тракторист свидетельствине илме вара районти 4 шкулта май пур: Ильинкăри, Чуманкассинчи, Мăн Сĕнтĕрти тата Орининти вăтам шкулсем лицензи илнĕ. «В» тата «С» категорисене илме 449 вĕренӳ сехечĕ пулмалла, «Д» категори валли – 491 сехет, «Е» категори валли – 453 сехет, «F» категори валли – 479 сехет. Çак вĕрентӳ планне тултарсан кăна килĕшсе тăракан свидетельствăна алла илме пулать. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче Ильинкăри тата Чуманкассинчи вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнă хăш-пĕр çамрăксем аттестат илнипе пĕрлех тракторист свидетельствине те алла илчĕç, – пĕлтерет райадминистрцин вĕрентӳ тата çамрăксен политикин пайĕн пуçлăхĕ З. Дипломатова.

Професси хатĕрлевĕ пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсен программине пĕтĕмĕшле патшалăх экзамен майĕпе иртекен патшалăх аттестацине кĕртнĕрен те хĕсĕнчĕ темелле. Ачасем аслă классенче хăйсем малалла вĕренмелли ене суйласа илеççĕ: социаллă-гуманитарлă ен, физикăпа математика, çут çанталăкпа наука енĕ. Агротехника енĕ – сайра хутра çеç.

– Професси хатĕрлевĕнчи йывăрлăхсем пурлăхпа техника бази çителĕксĕррипе те çыхăннă. Вĕрентӳ планĕпе пăхнă сехетсене, курссене ертсе пыма шкулсенче специалистсем те çук, – каласа парать Зоя Юрьевна.

Çак ыйтăва нумай пулмасть район администрацийĕн пуçлăхĕ ертсе пыракан канашлура та сӳтсе явнă. Районта пĕр-пĕр хуçалăх никĕсĕ çинче вĕренӳ центрне уçасси пирки сăмах пулнă. Унта программăпа пăхнă 172 сехет вĕренӳ курсне 18 çултан аслăраххисен çӳреме май пулĕ. Шкулсенче тракторист курсне вĕренсе пынисем вара çул çитсессĕн çак центрта экзамен тытса алла права илме пултарĕç.

Шкулсенче автодело курсĕсене йĕркелеме те пулать иккен. Çакна валли учрежденин лицензи илмелле. «А» категориллĕ водитель курсĕсем 192 сехетрен, «В» категорилли – 206 сехетрен, «С» категорилли – 279 сехетрен тăраççĕ. Кунсăр пуçне курссем практика ĕçне те палăртаççĕ: 16, 32 тата 50 сехет. Апла пурлăхпа техника бази те кирлĕ. Çак ĕçе шкулсенче аталантарма пулăшас текенсем те пулĕ тен. Кашнин сĕнĕвне вĕрентӳ пайĕнче пăхса тухса тĕрĕс йышăнусем тума хатĕр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Малиновка 65 çул тултарчĕ

Иртнĕ шăмат кун, сентябрĕн 15-мĕшĕнче, Муркаш ял тăрăхне кĕрекен Малиновкăра ял уявĕ иртрĕ. Малиновка 65 çул тултарчĕ.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи хыççăн йĕркеленнĕ ялăн ячĕ пылак çырлапа çыхăнни те курăнать. Вăл вăхăтра çывăхри вăрмансенче хăмла çырли (малина) нумай пулнă теççĕ...

Ял çыннисене саламлама эпир районти депутатсен Пухăвĕн депутачĕпе Ф. Григорьевăпа тата ял тăрăхĕн депутачĕпе Р. Потаповпа пĕрле çитрĕмĕр.

Хамăр çуралса ӳснĕ, пурăнакан вырăн яланах чи хакли, чи тăванни. Çавăнпа та Малиновкăсене ял тăнăçлăхĕшĕн кашнинех тăрăшмаллине те каласа хăвартăмăр. Обществăлла пурнăçра активлăхпа палăраканнисене вара Тав çырăвĕсемпе чысларăмăр.

Малиновкăсем уява тĕплĕн хатĕрленни палăрчĕ. Кукăль-çăмахпа, шарккупа, ытти апат-çимĕçпе сĕтел питĕ пуян пулчĕ.

Ял уявĕ




Ял çинчен каласа кăтартакан сăн ӳкерчĕксен стендне йĕркеленĕ кунта, ачасен тăван ялĕ пирки тунă ӳкерчĕкĕсем те кăмăла хăпартрĕç. Кунта пурăнакансем хăйсен ялне юратни сисĕнчĕ.

Уява культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Ю. Жуков ертсе пыракан «Илем» ансамбль вара чăнах та илем кӳчĕ. Муркашри информаципе культура центрĕ çумĕнчи çак ушкăнпа пĕрле халăх савăнчĕ, юрласа ташларĕ.

Ял уявĕнче çамрăксем валли спорт ăмăртăвĕсем хатĕрленĕ. Ачасемпе аслисенчен тăракан командăсем тĕрлĕ енлĕн ăмăртрĕç: михĕ ăшне тăрса та сикрĕç, ачасене алăсем çинче йăтса тата ытти майпа ăмăртрĕç. Эстафета та, ял уявĕ те пĕтĕмĕшле питĕ хавас иртрĕ.

**Т. МЕШКОВА,**
**Муркаш ял тăрăхĕн эксперт специалисчĕ.**

Статистика

# Семинар иртрĕ

Сентябрĕн 19-мĕшĕнче района Патшалăх статистика федераллă службăн Чăваш Республикинчи территори органĕн ертӳçи Э. Максимова ĕçлĕ çул çӳревпе килчĕ. Вăл Муркаш ял тăрăхĕнче пулчĕ, хушма хуçалăх кĕнекине çырас ĕç епле пынипе паллашрĕ. Уйрăмах выльăх-чĕрлĕх шутне çырассине, акмалли-лартмалли çĕр лаптăкĕсен калăпăшне палăртнине тимлĕх уйăрчĕ. Ун хыççăн районти ял тăрăхĕсен специалисчĕсемпе çак ыйту тавра семинар ирттерчĕ. Асăннă ĕç çĕнĕ мел çине куçни вара специалистсемшĕн хăйне майлă йывăрлăх кăларса тăрататать.

– Хушма хуçалăхăн çĕнĕ кĕнекине йĕркелессинче, вăя кĕртессинче ЧР Ял хуçалăх министерстви ответлă пулса тăрать, – терĕ Эльвира Геннадьевна семинара хутшăнакансене.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Прокуратурăран

# Алимент парăмĕ пысăк

Пĕр хĕрарăм район прокуратурине заявлени çырнă. Унта çул çитмен ача тĕлĕшпе Мăн Сĕнтĕрте пурăнакан ашшĕ алимент укçи тӳлеменни пирки пĕлтернĕ. Çавна май прокуратура ĕçченĕсем тĕрĕслев ирттернĕ.

Шупашкар хулинчи Калинин сучĕн йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн çак арçыннăн алимент укçи тӳлемелле. Çакна тĕпе хурса Муркаш районĕнчи суд пристав исполнителĕсем ĕç пуçарнă. Апла пулин те 1974 çулта çуралнă арçын кĕçĕн çулхи ачана усрама алимент укçи тӳлемен. Пĕчĕкскерĕн вара вылямалла, тумланмалла тата ытти те. Çапла вара пĕтĕмĕшле парăм калăпăшĕ 361 пин те 865 тенкĕпе танлашать.

**А. ЧЕРНОВ,**
**прокурор пулăшуçи.**

Ĕç рынокĕ

# Ярмăрккăсем ĕç тупма пулăшаççĕ

Ĕç рынокĕнчи йывăрлăха сирес тата ĕç шыракан граждансене кĕске вăхăтра ĕç тупса парас тĕллевпе районти ĕçпе тивĕçтерекен центр вакансисен тата вĕренӳ вырăнĕсен ярмăрккине ирттерет. Ярмăрккăсем ĕç рынокĕнчи лару-тăрупа, ĕç вырăнĕсемпе паллаштараççĕ, вĕсене хутшăнса ĕç паракансем пирки, халăха ĕçпе тивĕçтерессинче патшалăх услугисем пирки пĕлме май пур.

Практика специализациленĕ ярмăрккăсем ăнăçлăрах иртнине кăтартса парать. Вăл шутра çул çитменнисем валли, çамрăксем, инвалидсем валли уйрăм ярмăрккăсем йĕркелени лайăх. Кунсăр пуçне пенсионерсем валли е тивĕçлĕ канăва тухма хатĕрленекенсен уйрăм ярмăрккисем иртеççĕ.

Ĕç тупас ыйту çивĕч пулнине кура кăçал та ĕçпе тивĕçтерекен центр 4 ярмăрккă ирттерчĕ. Унта çул çитменнисем, шкул представителĕсем хутшăнчĕç. Çапла вара çамрăксене вăхăтлăх ĕçпе тивĕçтернĕ. Пенсионерсемпе çак вăхăта çитсе пыракансем валли пĕр ярмăрккă йĕркеленĕ.

Ярмăрккăсене хутшăннă 195 çынран 188-шне ĕç тупса панă.

**Н. ДИМИТРИЕВА.**

Тивĕç

# Умра – кĕрхи призыв

Анчах яшсене çара ăсатас çурхи тапхăра вĕçлерĕмĕр, сисмесĕрех кĕрхи те ума çитрĕ.

Халĕ октябрь – декабрь уйăхĕсенче 1985 – 1994 çулсенче çуралнă яшсене çар ретне тăрататпăр. Кашни çамрăках аттесен, асаттесен ырă йăли-йĕркине çирĕп тытса пыма тивĕç.

Пулас салтаксене çар ĕçĕ валли маларахах хатĕрлес тĕллевпе Чăваш Республикинчи çар комиссариачĕн Муркашпа Элĕк районĕсенчи пайĕ ДОСААФ вĕрентӳ организацийĕсенче «С», «ВС», «Д», «Е» категориллĕ водительсене вĕрентсе хатĕрлет. Салтака кайма хатĕрленекен çамрăкăн кун пирки маларах пĕлтермелле.

Медицина тулли тĕрĕслевĕ витĕр тухнă «А» тата «Б» категориллĕ граждансем çар ретне тăма юрăхлă. Хăшĕ пĕри вара çар ретне тăрассинчен пăрăнас тĕллевпе темиçе тапхăр хушши медицина тĕрĕслевĕ ирттермест. Çапла майпа ку тĕлĕшри пĕтĕмĕшле ĕçе вăрахлатаççĕ, вĕсем ăçта пурăнни те паллă мар. Çавна май саккуна пăхăнман яшсене вара явап тыттарма ирĕк пур.

Хисеплĕ ашшĕ-амăшĕ! Сирĕн ывăлăр тĕрĕс çултан ан пăрăнтăрччĕ, тивĕçе вăхăтра тата хăй ирĕкĕпе пурнăçлатăрччĕ. Çавăнпа та салтак пулассин пысăк ответлăхне маларахах тĕрĕс ăнлантарса парăр. Енчен те вăл çар комиссариачĕ чĕнсен те пирĕн пая килмерĕ пулсан, ăна эсир çавăтса килме тăрăшăр. Хальхи вăхăтра малтанхи пек асăннă тивĕçе 2 – 3 çул пурнăçламалла мар.

Çапах та çар комиссариачĕн ыйтăвне аякра хăварман çамрăксем те сахал мар пирĕн хушăра. Хăшĕ-пĕри вара хăйне йывăртарах вырăна яма та хистесех ыйтать. Ăçта ярассине призыв комиссийĕ пулас салтака тĕплĕ тĕрĕслесен палăртать.

Паллах кашни яш ВДВ, ВВ МВД, РВСН пайсене юрăхлă пулаймасть. Кунта сывлăх çирĕплĕхĕ, ӳт-пӳ тĕреклĕхĕ, пĕлӳ шайĕ малти вырăнта тăрать.

Çавăн пекех кĕрхи призыв тапхăрĕнче Мускав хулинчи Президент полкĕнчи çар ĕçĕ валли çулсеренех кандидатсем суйлаççĕ. Кунта каллех тĕрлĕ категорипе çирĕп тĕрĕслев ирттереççĕ.

Енчен те сирĕн çар ĕçĕпе çыхăннă ыйтусем пулсан пирĕн пая килсе е шăнкăравласа ыйтса пĕлме пултаратăр.

**А. КОЧУРОВ,**
**Чăваш Республикин çар комиссариачĕн Муркашпа Элĕк районĕсенчи пайĕн ертӳçи.**



# Сывлăхлă пулар!



## Шăнса пăсăлассинчен асăрханмалла



Сентябрĕн малтанхи вунă кунлăхĕнчех Шупашкарта респираторлă вируслă инфекци чирĕсемпе чирленĕ тĕслĕхсем палăрмаллах ӳснине, Шупашкар хули çак инфекци вăйлă сарăлса пыракан вунă хула йышне кĕнĕ пирки тĕрлĕ массăллă информаци хатĕрĕсем пĕрре мар пĕлтерчĕç. Чирлекенсенчен ытларахăшĕ – ачасем. Çакна специалистсем каникул хыççăн ачасем пĕр-пĕринпе тĕл пулса хăйсем хушшинче тĕрлĕ инфекцие хăвăрт сарăлма панипе çыхăннине калаççĕ. Тен респираторлă вируслă инфекци чирĕсемпе чирлесси çак кунсенчех чакса та пырĕ. Анчах та чирлессинчен асăрханмалла.

